Чăваш автономине – 100 çул

Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

47 (8813) № ✻ Ытларикун, 2020 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 23-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

Аталану планĕ ĕç программи пулĕ

Июнĕн 22-мĕшĕнче районсемпе хуласен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе эрнесеренхи канашлу ирттернĕ чухне Чăваш Ен Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев Чăваш автономийĕ 100 çул тултарнине уявлассипе çыхăннă мероприятисем çинче чарăннă.

Республика кунне уявланă чухнехи кăçалхи официаллă мероприятисенчен пĕри – Экономикăн аслă канашĕн ларăвĕ. Унăн шайĕнче Чăваш Республикин çитес пилĕк çуллăхри экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн программине презентацилеме пăхнă. Олег Николаев асăннă ĕç мероприятине хатĕрленессине пысăк тимлĕх уйăрма ыйтнă.

Вăл палăртнă тăрăх, республикăн пилĕк çуллăхри экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн программи чăн-чăн «ĕç программи» пулса тăма тивĕç.

«Эпир халĕ документăн юлашки версине илтĕмĕр ĕнтĕ. Июнĕн 24-мĕшĕнче ăна сӳтсе явасси тухăçлă ирттĕр тесе ăна пур экспертпа пĕрле тепĕр хут пăхса тухăпăр», – пĕлтернĕ Чăваш Ен Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ – финанс министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Михаил Ноздряков.

Ĕнерхи канашлура регионăн промышленноç тата энергетика аталанăвĕн 2024 çулчченхи стратегийĕпе Чăваш Ен промышленноç тата энергетика министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Лекарев паллаштарнă, ытти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене те сӳтсе явнă.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-служби.

Çырăнтару – 2020

Июнĕн 25-мĕшĕччен çырăнтараççĕ

«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 480 тенкĕ те 6 пус.

Енчен те эсир вăхăт тупайман пулсан, кая юлман-ха. Кун пирки почтальонсене çеç пĕлтерĕр, вĕсем вара сирĕн пата пырсах çырăнтарĕç.

Редакци.

Медале тивĕçрĕ

Ыран Чăваш Енре пысăк уяв – Республика кунĕ. Кăçал ăна пысăк йышпа паллă тума май килмест пулин те, шăпах çак кун Чăваш автономине туса хунăранпа 100 çул çитни хăех пур ăрава та пĕр йыша чăмăртать. Тĕрлĕ ăру вăй хунипе ĕнтĕ Чăваш Ен çулсеренех аталанса пынă.

Валентина Лебедева акушер Ятманти фельдшерпа акушер пунктне ертсе пыма тытăннăранпа 30 çул та иртнĕ. Чун ыйтнипе суйласа илнĕ ĕçре тăрăшса çак тапхăрта вăл çĕр-çĕр çынна медицина пулăшăвĕ те, кирлĕ сĕнӳсем те панă. Хальхи вăхăтра медицина ĕçченĕ Ятманти, Йӳтĕркассинчи, Çĕньял Очăкассинчи пурĕ 400 ытла çыннăн сывлăхĕшĕн ответлă пулса тăрать.

Çак кунсенче Валентина Лебедева «100-летие образования Чувашской автономной области» медале илме тивĕçрĕ. «Ку медальре манăн вăтăр çулхи ĕç кăна мар, районти фельдшерпа акушер пункчĕсенче ку таранччен вăй хунă çынсен ĕçĕ», – кĕскен палăртрĕ сумлă наградăна тивĕçнĕ медицина ĕçченĕ.

Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.

ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!

Сире Чăваш автономине йĕркеленĕренпе 100 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатăп.

Çак уяв тăван ене юратакан, унăн хăйне евĕрлĕ кун-çулĕпе, ăс-хакăлĕпе культурин паха еткерлĕхĕпе мăнаçланакан мĕнпур çынна пĕрлештерет.

Чăваш халăх историйĕ кăсăк та пуян, вăл нумай-нумай ĕмĕре тăсăлать. Çапах та чăваш патшалăхĕн кун-çулне уйрăммăн илсен, унăн юлашки 100 çулхи тапхăрĕнче пирĕн аслă çĕршывăмăрта мĕн пулса иртни туллин те уçăмлăн сăнарланнă.

Малалла çирĕппĕн аталанма пулăшакан вăй пирĕншĕн хуть хăçан та халăхăмăрăн ĕçченлĕхĕ пулса тăрать. Вăрçăчченхи çулсенче Чăваш Ен хут пĕлменлĕхе пĕтерес енĕпе малта пыракан автономисенчен пĕри шутланнă. Республика çав тапхăрта хытă сийлĕ çулсем тăвас енĕпе малта пынă, çавăншăн ăна Ленин орденĕпе чыслана.

Чăваш Ен ывăлĕсемпе хĕрĕсем Çĕнтерĕве çывхартассишĕн ырми-канми тăрăшнă, вăрçă хыççăнхи çулсенче Тăван çĕршыва арканăран чĕртсе тăратнă, тĕнче уçлăхне çул хывнă.

Халĕ Чăваш Республики умĕнче çĕнĕ майсем уçăлаççĕ. Вĕсене пурнăçа кĕртме географи тĕлĕшĕнчен лайăх вырăнта вырнаçни, пирĕн питĕ ырă та уçă чунлă халăхăмăр, культурăпа ĕç тата ăслăлăх йăли-йĕркисем пулăшаççĕ.

Чăваш автономийĕ 100 çул тултарнине эпир çăмăлах мар лару-тăрура, анчах та тивĕçлĕ кăтартусемпе кĕтсе илетпĕр. Малта – çĕнĕ инçетсем, çĕнĕ тĕллевсемпе çитĕнӳсем. Кулленхи ĕçĕмĕре тата кашнин професси ăсталăхне пула пирĕн тăван çĕрĕн вăй-халĕпе пуянлăхĕ ӳсет. Сире ырă пуçарусенче çитĕнӳсем тума, çирĕп сывлăх, ырлăх тата хастарлăх сунатăп. Чăваш халăхĕн çитĕнĕвĕсемпе тивĕçлипе мухтанар тата вĕсене ӳстерсе пырар!

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан О. НИКОЛАЕВ.

ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Камшăн Тăван çĕршыв хаклă тата çывăх – вĕсемшĕн июнĕн 24-мĕшĕ уйрăмах паллă кун. Ырă кăмăллă та тимлĕ амăшĕ пекех, Чăваш Ен хăйĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсене пулăшса тата хавхалантарса пырать, паттăр ĕçсем тума вăй-хал парать тата хăпартлантарать. Кăçалхи уяв мухтавлă юбилейпа çыхăннă. 100 çул хушшинче пирĕн республика тĕттĕм провинци кĕтесĕнчен пуçласа хăватлă аграри тата индустри центрĕ пулса тăчĕ, хăйĕн тивĕçлĕ ятне çĕршыв тулашĕнче те анлă сарчĕ. Чăваш Ен мухтавне çĕклекенсем – тĕнче уçлăхне парăнтаракансемпе çар çыннисем, ăсчахсемпе культура ĕçченĕсем, тухтăрсемпе педагогсем, рабочисемпе çĕр ĕçченĕсем. Пурте эсир, манăн хаклă ентешĕмĕрсем, тăван ене çĕнетсе улăштарма хăвăрăн тӳпене хыватăр.

«Ялпа, мирпе, халăхпа пĕрле» – çапла пурăнма тата ĕçлеме хушнă пире хамăрăн аттесемпе асаттесем. Пурте пĕрле пулсан, пĕр-пĕрне пулăшса пырсан кăна эпир йывăрлăхсене парăнтарма тата çĕнĕ çитĕнӳсем тума пултаратпăр. Республика кунĕнче вара Раççейре Çĕнтерӳ Парачĕ иртни – лайăх паллă. Çакă вăл çутăлăх, ĕненӳ тата шанчăк палли.

Уяв ячĕпе сире, хаклă ентешĕмĕрĕсем! Пурсăра та сывлăх, ăнăçусем тата телей сунатăп!

Раççей Федераци Канашĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ, Чăваш Республикин пĕрремĕш Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.

Июлĕн 1-мĕшĕ – сасăлав кунĕ

Сасăлама пĕр эрне уйăраççĕ

Раççей Тĕп саккунне – Конституци кĕртме сĕнекен тӳрлетӳсемшĕн сасăламалли куна июлĕн 1-мĕшне палăртнă. Апла пулин те çынсен июнĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса сасăлав участокне пырса сасăлама, тӳрлетӳсем тĕлĕшпе хăйсен шухăшне пĕлтерме май пулать. Мĕншĕн тесен июнĕн 25-мĕшĕнче сасăлав участокĕсем сасăлава хутшăнакансене йышăнма тытăнаççĕ. Сасăлама пĕр эрне уйăрни сасăлавăн официаллă кунĕнче – июлĕн 1-мĕшĕнче участоксенче çынсем йышлă пухăнса каяссине асăрхаттарас тĕллевпе çыхăннă. Коронавирус инфекцийĕ вăхăтĕнче çапла туни чи малтанах çынсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерме кирлĕ.

Районĕпе сасăлав участокĕсем 51 йĕркеленĕ. Вĕсем çынсене йышăнма хатĕр. Участоксем июнĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа çынсене кунне икĕ сехет йышăнаççĕ. Пĕр сехет хушшинче участокра 12 çынран ытла мар сасăлама пултарать. Çакă та хăрушсăрлăхпа çыхăннă. Июлĕн 1-мĕшĕнче вара сасăлав участокĕ ирхи 8 сехетрен тытăнса каçхи 8 сехетченех ĕçлет.

Çынсене тухса çӳрессинчен асăрхаттарас тĕллевпе вырăнсене пырса сасăлаттарассин мелĕпе анлăрах усă курма палăртнă. Кун пек куçса çӳрекен сасăлав пункчĕсене урмсенче, ялсенчи обществăлла вырăнсенче йĕркелеме пăхнă.

Çавăн пекех ваттисем, инвалидсем патне килĕсене пырса сасăлаттарассин мелĕ те сыхланса юлать. Кун пирки комиссие кам урлă та пулин е шăнкăравласа пĕлтерес пулать.

Сасăлава хутшăнакансене пурне те харпăр хăйне авторучкăпа, маскăпа тата перчеткепе тивĕçтереççĕ. Сасăлава пыракансенне пуринне те ӳт-пӳ температурине виçеççĕ. Çынсен 1,5 метр дистанция пăхăнма тивет. Паспорт çумра пулмалла. Унти даннăйсене хăрпăр хăйĕн уçса кăтартмалла пулать.

Участоксене пурне те дезинфекци хатĕрĕсемпе тивĕçтеретпĕр. Вăхăтран вăхăта участокри сĕтел-пукана, кабинăсене пĕтĕмпех дезинфекцилесе тăрĕç.

Конституци кĕртме сĕнекен тӳрлетӳсем пирĕнтен кашнинех пырса тивеççĕ. Çавăнпа та сасăлава пурте активлă хутшăнасса, сасăлав пур участокра та сыхлăх, асăрхану мелĕсене пăхăнса йĕркеллĕ иртессе шанас килет.

Л. ТАРАСОВА, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, Муркаш территори суйлав комиссийĕн председателĕ.

Уяв саламĕсем

УВАЖАЕМЫЕ СООТЕЧЕСТВЕННИКИ!

Сердечно поздравляю вас со знаменательной датой в истории нашей республики – 100-летием образования Чувашской автономии.

За этот вековой период наш родной и любимый край прошел большой и славный путь. Сегодня Чувашия – современный индустриально-аграрный регион России с мощным промышленным потенциалом и высокотехнологическим сельским хозяйством. Больших высот достигли и другие отрасли экономики. Мы по праву гордимся темпами развития образования и науки, культуры и здравоохранения, физкультуры и спорта, всей социальной сферы.

Это результат поистине самоотверженной работы трудящихся всех поколений Чувашии, и мы бесконечно благодарны им.

Для нас неоценима постоянная поддержка федерального центра, нерушимая дружба и взаимопомощь между всеми братскими народами великой России.

Желаю вам, дорогие земляки, новых трудовых свершений во имя дальнейшего процветания нашей родной республики, доброго здоровья, счастья и оптимизма.

Депутат Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации Н. МАЛОВ.

ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Сире пурсăра та юбилей кунĕпе – Чăваш автономине туса хунăранпа 100 çул çитнĕ ятпа – ăшшăн саламлатăп. Çĕр çулхи юбилей – республика историйĕшĕн курăмлă утăм. Пирĕн регионăн экономикăпа социаллă тата культура аталанăвне Муркаш районĕ те пысăк тӳпе хывать. Чăваш Республикин малашлăхĕ пирĕн алăра, мирпе тата килĕшӳпе пурăнас тĕллевре пулнине куратпăр. Йывăрлăхсене çĕнсе республика аталанăвĕшĕн тата çамрăк ăру пуласлăхĕшĕн тăрăшасси те – паян пурнăçламалли ĕç. Çакна шута илсе пурне те Тăван çĕршывра телейлĕ те сывă, кăмăллă пурăнма çирĕп сывлăх сунатăп!

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ А. ФЕДОТОВ.

Вĕренме чĕнеççĕ

Кадет пулас тесен

Совет Союзĕн Геройĕ А. Кочетов ячĕллĕ Чăваш кадет корпусĕн 6, 8 тата 10 класĕсене вĕренме кĕме йышăнаççĕ.

Июнĕн 1 – 30-мĕшĕсенче 6-мĕш тата 8-мĕш классене вĕренме кĕрес текенсенчен документсем йышăнаççĕ, июнĕн 22 – июлĕн 10-мĕшĕсенче – 10-мĕш класа вĕренме кĕрес текенсенчен.

Кадет корпусĕнче пĕтĕмĕшле тĕп тата вăтам пĕлĕвĕн программисемпе вĕрентеççĕ. Кунсăр пуçне ачана çар е патшалăхăн ытти службине валли хатĕрленме пулăшакан хушма пĕлӳ параççĕ.

Кадет корпусне вĕренме кĕрес текенсенне вырăс чĕлхипе тата математикăпа ирттернĕ экзаменсен кăтартăвĕсене шута илеççĕ. Çавăн пекех ӳт-пӳ аталанăвĕпе кадет корпусĕнче пурăнма кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен хатĕррине те тĕрĕслеççĕ. Ачасен пултарулăхĕпе спортри çитĕнĕвĕсене те шута илеççĕ.

Тĕплĕнрех Чăваш кадет корпусĕн официаллă сайтĕнче пĕлме пулать (https://chebkadet21.ru/index.php/pravila-i-sroki-priema).

Хамăр инф.

Ыран – Парад

Аслă Çĕнтерӳ Парачĕ

75 çул каялла – 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Мускавра Хĕрлĕ площадьре Хĕрлĕ Çар вăйĕсен Çĕнтерӳ Парачĕ иртни – истори пĕлтерĕшлĕ пулăм. Ку вăл историллĕ парад, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче СССР Германие çĕнтернĕ ятпа иртнĕ. Мероприятие Георгий Жуков маршал хутшăннă, çарсене команда параканĕ Константин Рокоссовский маршал пулнă.

Мероприятире тăшман ялавĕсемпе штандарчĕсене пăрахăçланин церемонийĕ иртнĕ, парад хыççăн вĕсене Хĕç-пăшал вăйĕсен тĕп музейне панă. Савăнăçлă шествие 35 пин çын хутшăннă.

***

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнĕ ятпа Парад 2020 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче иртет. Ку вăл кану кунĕ пулать. Парад ирттересси тата артиллери салючĕ парасси пирки указа РФ Президенчĕ Владимир Путин алă пуснă.

Раççей çар çыннисем тата мероприятие хутшăнакан ытти çĕршыв участникĕ Мускаври Хĕрлĕ площадьпе маршпа паллă кун утаççĕ – 1945 çулхи Çĕнтерӳ Парачĕ пулнăранпа 75 çул иртнĕ хыççăн. Ун чухнехи парада çĕнтерӳçĕ-салтаксем – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин салтакĕсемпе офицерĕсем хутшăннă.

Президент указĕнче çак çыхăнăва уйрăммăн палăртнă:

«Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа тата 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Çĕнтерӳ Парачĕ ирттернĕренпе 75 çул çитнине паллă тунă май, фашист захватчикĕсене çапса аркатакансен ăрăвне тав тунă май, çапла йышăнатăп: 2020 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче çар техникине тата хĕç-пăшалне яваçтарса Мускаври Хĕрлĕ площадьре тата Раççейĕн ытти хулинче çар парачĕсене ирттермелле, çирĕплетнĕ йĕркепе Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин официаллă символĕпе – Çĕнтерӳ ялавĕпе усă курмалла», – палăртнă президент указĕнче.

РФ Конституцине кĕртме сĕнекен тӳрлетӳсем

Патшалăх социаллă гарантисемпе тивĕçтерет

Çĕршывăн Тĕп саккунне кĕртме палăртакан тӳрлетӳсем пирки хăйĕн шухăшĕсене Чăваш Республикин Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин «Социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен центр» хысна учрежденийĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Валентина АНИКИНА пĕлтерме кăмăл турĕ:

– Çĕршыв Конституцине кĕртме сĕнекен улшăнусене тишкернĕ май, çирĕплетсех çавна калама пулать. Çынсен социаллă ыйтăвĕсене татса парассишĕн яваплăха малашне Раççей патшалăхĕ ытларах хăйĕн çине илме палăртать. Çакна чи малтанах граждансен тивĕçлĕхне хӳтĕлессине гаранти панипе ăнлантарнă пулăттăм. Ку вăл йывăр чирлекен ачасене пулăшу парассипе те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çавăнпа та малашне тивĕçлĕ пурнăç условийĕсем, унпа çынсене, вăл шутра чирлĕ ачасене те епле тивĕçтерессин ыйтăвĕсем обществăра тивĕçлĕ вырăн тупĕç тесе шухăшлатăп.

Сĕнекен улшăнусем социаллă патшалăхăн статусне хăйне те пырса тивеççĕ. Вĕсенче патшалăх камшăн яваплă пулса тăни, камсене пулăшупа тивĕçтерме шантарни пирки уçăмлă каланă. «Социаллă патшалăх» термина питĕ лайăх уçса панă, тĕп çул-йĕре те çирĕп палăртнă.

Тĕрĕссипе илсен, патшалăхпа гражданссем хушшинчи хутшăнусем социаллă килĕшӳ формипе йĕркеленеççĕ. Гражданссем хăш-пĕр ыйтăва татса парассипе хăйсен правин пĕр пайне патшалăха шанаççĕ. Патшалăх вара вĕсем тĕлĕшпе йышăну тăвассишĕн тата ыйтусене татса парассишĕн яваплăха хăйĕн çине илет. Халĕ вара куратпăр ĕнтĕ, асăннă килĕшĕвĕн пĕр енĕ – патшалăх хăй тĕллĕнех хăйĕн çине ытларах яваплăх илме палăртать.

Пулăшу профессийĕсен специалисчĕсен, вăл шутра социаллă ĕçченсен обществăри вырăнĕ пирки асăнни те пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. Тĕрĕссипе унччен кун пеккисен ĕçĕ-хĕлĕ курăнсах та кайман. Конституцире ку профессисем пирки асăнни социаллă сфера статусне самай çĕклет. Çакă питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен ытларах чухне çынсем укçа-тенке кура мар, чун туртнипе хăйсен пурнăçне çак ĕçпе çыхăнтараççĕ. Вĕсен ĕçĕ пĕлтерĕшлĕ тата кирлĕ пулни пирки Конституцире асăнни кун пеккисемшĕн пысăк хавал пулса тăрĕ.

Ку шайри документра волонтерсем тата коммерциллĕ мар организацисем пирки асăнни – пĕрремĕш хут. Çакă мĕн пирки калать-ха? Апла пулсан коммерциллĕ мар организацисем çак вăхăта социаллă программăсене пурнăçа кĕртессипе патшалăхăн тулли праволлă партнерĕсен шайне çитнĕ ĕнтĕ. Çакна çĕршывра коронавирус инфекцийĕпе кĕрешессипе çыхăннă ĕçсене йĕркелесе туса пынине тишкернĕ май та лайăх курма пултаратпăр.

Граждан обществин статусĕ тата яваплăхĕ ӳсет. Малашне пирĕн сĕнмелле кăна мар, конкретлă йышăнусем туса хатĕрлеме те активлă хутшăнас пулать.

В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.

Актуаллă

Предприятисене пулăшусăр хăвармаççĕ

Коронавирус инфекцийĕ сарăлни чылай предприятие чăннипех те йывăрлăха кĕртсе ӳкерчĕ. Уйрăмах çакна пĕчĕк тата вăтам предприятисем тĕлĕшпе каламалла. Çавна май патшалăх пĕчĕк тата вăтам предприятисене аренда хутшăнавĕсем тĕлĕшпе пулăшмалли антикризис мерисене пăхса хунă. Вĕсем пирки тĕплĕнрех район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнавĕсен пайĕн пуçлăхĕ Олеся ВАЛЕЖНИКОВА каласа пама кăмăл турĕ:

– Йывăрлăха лекнĕ кун пек предприятисем валли «аренда каникулĕ» пăхса хунă. Халĕ «аренда каникулĕн» мелĕсем пирки уйрăммăн чарăнса тăрар.

Отсрочка пирки

Федераци пурлăхĕпе усă кураксен, вăл шутра çирĕплетсе панă пурлăхпа усă кураксен, тӳлев отсрочки 2020 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2020 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен пулать. Федераци хыснинчи пурлăхпа усă курнăшăн аренда тӳлессинчен хăтарнисен отсрочка июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнать. Ытти йышши харпăрлăхри пурлăхпа усă кураксен вăл пысăк хатĕрленӳ тапхăрне палăртнă е чрезвычайлă лару-тăру туса хунă кунран тытăнса 2020 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен пулать.

Аренда тӳлевĕн парăмне 2021 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2023 çулчченхи тапхăрта тӳлесе татма тивет. Тӳлев виçи уйăхсеренхи аренда тӳлевĕн 50 процентĕ шайĕнче пулмалла.

Федераци пурлăхĕпе усă курманнисем пысăк хатĕрленӳ тапхăрĕнче е чрезвычайлă лару-тăру вăхăтĕнче аренда тӳлевне пачах тӳлемеççĕ. Ку тапхăр вĕçленнĕрен тытăнса 2020 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен аренда тӳлевĕ 50 процентпа танлашать.

Çăмăллăхсемпе тивĕçтерекен тапхăрта аренда тӳлевĕсем туманшăн штрафсемпе ытти хушма тӳлев пачах пулмасть.

Тӳлеве чакарасси пирки

Пысăк хатĕрленӳ тата чрезвычайлă лару-тăру тапхăрĕ пулнă вăхăтлăха аренда тӳлевĕн виçине чакарма пултараççĕ. Ку тапхăр аренда тӳлевĕ тӳлессипе отсрочка панă чухне çăмăллăх пăхса хунă вăхăт та пулма пултарать. Тӳлев суммине пĕчĕклетни арендаторăн парăм пухăнса пырассине пĕлтермест.

Тӳлеврен хăтарасси пирки

Коронавирус инфекцийĕ алхаснине пула уйрăмах пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ сферăри предприятисене аренда тӳлевĕнчен пачах хăтарма та пултараççĕ. Кун пек арендатора тĕп е хушма экономика ĕçĕхĕлĕн кăтартăвĕсене кура палăртаççĕ. ЕГРЮЛ/ЕГРИП-ри (патшалăхăн пĕрлехи реестрĕнчи) 2020 çулхи апрелĕн 1-мĕшнехи кун пек информаци актуаллă пулса тăрать.

Пысăк хатĕрленӳ тата чрезвычайлă лару-тăру тапхăрĕнче арендатор хăйĕн пурлăхĕпе усă курма пултарайманни, санитарипе эпидемиологи ăнăçлăхне тивĕçтерме ĕçхĕле чарса лартма тивни аренда тӳлевĕнчен хăтармалли сăлтав пулса тăрать.

Çавна та каласа хăварасшăн. Хальхи вăхăтра районĕпе пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем пĕтĕмпе 713. Вăл шутран коронавирус инфекцийĕ вăхăтĕнчи «аренда каникулĕн» çăмăллăх мелĕсемпе усă курма кăмăл тунисем пĕтĕмпе те 3 кăна. Çавăнпа та предприятисен ертӳçисене пуçаруллăрах пулма, çăмăллăх мелĕсемпе активлăрах усă курма чĕнсе каланă пулăттăм. Ыйтусем пур пулсан район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнавĕсен пайне 62-2-66 номерпе шăнкăравлама пултаратăр.

В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.

Симĕс ĕç çи – 2020

Вăл ялан рейсра



Пурнăçа тата ĕçе юратакан çын хăйне хушнине кирек хăçан та яваплăха туйса, пахалăхлă пурнăçлама тăрăшать. Çакăн пек ĕçченсем Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пĕччен-иккĕн мар. Вĕсенчен пĕри – эсир **сăн ўкерчĕкре** куракан Сергей Лопатин. Ĕç ĕмĕрне тăван хуçалăха халалланăскер, çур акирен пуçласа хура кĕрченех ял хуçалăх кооперативĕн производствинче вăй хурать. Çавăнпа та тырă-пулă ўстересси, утă-сенаж хатĕрлесси, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси – уннăн çывăх ĕç.

– Атте-анне пире çĕр ĕçĕпе ура çине тăратнăран эпĕ те ўсерехпе ялтан тухса кайма шутламарăм. Хамăн пурнăçăма Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕпе çыхăнтартăм. Паян куншăн пĕртте ўкĕнместĕп, – терĕ водительте 1989 çултанпа вăй хуракан Сергей Евгеньевич. Кунпа пĕрлех вăл паян хуçалăхра выльăх апачĕ янтăлассипе хĕрў ĕç çи епле пыниле те паллаштарчĕ. Сăмах май, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçченĕсем пĕрлехи тăрăшулăхпа кăçал кĕске хушăра 500 тонна ытла утă янтăлама ĕлкĕрнĕ. Çакăнта С. Лопатин водителĕн тўпи те пур.

Умра – пахалăхлă сенаж хатĕрлесси. Ăна та технологие пăхăнса ытлă-çитлĕ хывса хăварасси пĕрлехи тĕллев пулнине хуçалăх ĕçченĕсем пĕр çын пек палăртрĕç.

РАЙОНĔПЕ. Çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне районта нумай çул ўсекен курăксене 1875 гектар (36 процент) çулнă. Çакăнпа усă курса хуçалăхсем пурĕ 970 тонна утă типĕтсе хатĕрленĕ. Кунти пысăкрах кăтартусем – Суворов ячĕпе хисепленекен тата «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕсен. «Свобода» хуçалăхра 2000 тонна яхăн сехаж хывса хăварнă. Ку вăл района кирлĕ массăн 9 проценчĕ çеç.

А. БЕЛОВ сăн ўкерчĕкĕ.

Ыйтăр – ответлетпĕр

Бройлер хăвăрт ўстĕр тесен

Çу кунĕсем çитнĕ май çывăх вăхăтра бройлер туянас ĕмĕт çуралчĕ. Ку таранччен ăна усраса курманран манăн ыйту нумай. Мĕнле пăхмалла вĕсене, ăçта тытмалла, хăш апат тĕп вырăнта пулмалла, епле йĕркене пăхăнса пурăнмалла, мĕн ытларах асра тытмалла? Çак ыйтусем çине хурав паракана малараxах тав тăватăп.

И. СМИРНОВ.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

Районти ялсенче юлашки çулсенче кайăк-кĕшĕк ĕрчетессипе кăсăкланакансем чăнах та нумайланнине асăрхатпăр. Кам çăмарта тăвакан чăх-чĕп тытать е хур-кăвакалпа ытларах кăсăкланать, кам бройлер е кăркка ўстерессипе интересленет т. ыт. те.

Вулавçă паян хускатнă ыйтупа эпир выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин выльăх тухтăрĕпе А. ФЕДОРОВĂПА çыхăнтăмăр. Алина Петровнăран çийĕнчех тивĕçлĕ хурав илтĕмĕр. Вăл пире çапла каласа пачĕ:

– Çуллахи вăхăтра килти хушма хуçалăхра бройлер ўстерсе паха аш-какай туса илме, чăнах та, йывăр мар: хўтлĕх туса памалла, вăхăтра тата тĕрĕс апатлантармалла, умра çителĕклĕ шыв тытмалла. Çамрăк чĕпсене, витĕр вĕрекен çил юраманран, малтанхи вăхăтра хăмаран тунă вăхăтлăх «çурт» пулни аван. Ăна тăвасси вара пĕртте кăткăс мар. Алă айĕнчи хăмасенчен тĕпсĕр ещĕк çеç ăсталамалла. Кун пек çурта симĕс курăк çинче вырăнтан вырăна куçарса лартма меллĕ. Çапла тусан чĕпсем симĕс курăка сăхса хăйсене кирлĕ витамина çителĕклĕ пуçтарĕç тата пĕр-пĕрне сăхса амантмĕç.

Бройлера ял çынни какайшăн усрать тесе шутлатăп. Çăмарта тăвакан чăхсене ирĕке кăларса уçăлтаратпăр пулсан, какайшăн çитĕнтерекеннисене ытларах читлĕхрех тытма юрать. Бройлер ытлашши хускалма юратмасть. Шăпах çакă ăна хăвăртрах ўт хушма пулăшать те.

Пĕчĕк чухне бройлер чĕпписем хĕвел ăшшинче выртма юратаççĕ. Апла пулин те вĕсене ытлашши пăчăхасран сулхăн кĕтес ăсталаса пани вырăнлă шутланать. Чĕпсем умĕнче ялан шыв пулмалли пирки ан манăр. Шăрăх кунсенче читлĕхе йывăçсем айне вырнаçтарма, çумăр çунă вăхăтра хўтте лартма меллĕ пулассине те шута илĕр.

Килти хушма хуçалăхра бройлер ĕрчетме хăшĕ-пĕри икĕ-виçĕ эрнери чĕпсене туянма тăрăшать. Эпĕ вара талăкрисем лайăхрах тесе шухăшлатăп. Мĕншĕн тесен кăштах ўстерсе сутакан чĕпсене хуçисем мĕн çитерсе усранине эпир пĕлсех каймастпăр. Талăкрисене апатлантарассине вара пуçласа хăв йĕркелетĕн. Вĕсене пĕчĕккĕ чухне епле пăхнинчен малашлăх мĕнлерех пуласси нумай килет.

Бройлера малтанхи 10 талăкра сивĕ çĕрте тытсан тата тĕрĕс мар апатлантарсан вăл хăвăрт ўсмест.

Шăмă çирĕп пулма бройлер чĕпписене кальци ытларах кирлĕ. Çак элемент çитмесен, вĕсем пĕр-пĕрне сăхма пуçлаççĕ. Кунашкал лару-тăруран вăхăтлă пăрăнса иртме чĕпсен рационĕнче шăмă çăнăхĕ е пулă çителĕклĕ пулни аван. Шăнтнă йўнĕ пулла вĕтетнĕ вĕлтĕренпе е ешĕл суханпа хутăштарса пани вырăнлă пулнине ан манăр. Бройлер усранинчен пысăк тухăç илес тесен çак рационтан çу каçипех пăрăнмалли çук.

Кунсăр пуçне чĕпсене тĕрлĕ чиртен вăхăтра сиплемелли препаратсене те ялан алă айĕнче тытмалла.

Налук инспекцийĕнче

Декларацие – портал урлă

Хальхи вăхăтра 3-НДФЛ декларацие хăвăршăн меллĕ вăхăтра тата черетсĕр онлайн майпа Федераци налук службин сайчĕпе усă курса кăна мар, патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕ урлă та ярса пама меллĕ. Çавăн пекех налуксем енĕпе парăм пуррипе çуккине те, хăвăрăн ИНН-а та пĕлме пултаратăр. Кунсăр пуçне патшалăх услугисен порталĕн сайтĕнче пĕрре регистрациленсен тата хăй кам пулнине çирĕплетў центрĕнче çирĕплетсен, кирек кам та Федераци налук службин сайтĕнчи харпăр хăй кабинетне кĕме пултарать.

3-НДФЛ налукне тўлеме вăхăт

Çавна аса илтересшĕн. Енчен те гражданин харпăрлăхри пурлăха сутнипе, парнеленипе е ытти тĕрлĕ майпа 2019 çулта тупăш илнĕ пулсан, вăл 2020 çулхи июлĕн 30-мĕшĕччен кун пирки налук органне декларацие тăратма тивĕç. Анчах та декларацие палăртнă налука июлĕн 15-мĕшĕччен тўлес пулать. Уйрăм предпринимательсем, патшалăх тытăмĕнче шутланман нотариуссем, адвокатсем те кун пек декларацие тăратма тивĕç. Енчен те гражданин декларацие налук вычетне илме тăратать пулсан, декларацие тăратмалли вăхăта чикĕлемен. Çавăнпа кун пеккисенчен декларацие çулталăк тăршшĕпех йышăнаççĕ.

Ыйтса пĕлмелли номер: (83536) 2-93-03.

С. БЕЛОВА,
РФ налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ.

Тирпейлĕ тавралăх

Тасалăхшăн кашни яваплă

Паян тăван тавралăх илемĕ пирки калаçасси час-часах малти вырăна тухать. Ун тĕлĕшпе çўллĕ шайра тĕрлĕ йышăну тăваççĕ, тирпейлĕхе ўстерме тата тăван ене хăт кĕртме нумай укçа-тенкĕ уйăраççĕ. Ку лайăх, анчах çаксем хыçĕнче вырăнта пурăнаканскен конкретлă ĕçĕсем пулмасан, тавралăхри тирпей-илем малти вырăна тухаймастех. Пире хупăрлакан тавралăха эпир хамăр сыхламасан, унăн малашлăхĕ пирки шутламасан, пирĕн хыççăнхи ăру валли çут çанталăк пуянлăхĕ çителĕклĕ юлмĕ. Чĕр чунсен тĕнчи те палăрмаллах чухăнланĕ. Çак çухатуран вăхăтра хăтăлас тесен пирĕн çут çанталăк ыйтăвĕсене çывăх пĕлмелле, унăн саккунĕсене пăхăнса пурăнмалла.

Çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче Ильинка ял тăрăхĕнче «Тирпейлĕ ен» экологи субботникĕ иртнĕ. Ăна пуçараканĕ тата ирттерекенĕ – ял тăрăхĕн администрацийĕ. Кунти специалистсем вырăнти культура ĕçченĕсемпе пĕрле тăван ене тирпейлессипе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Экологи субботникне тухса вĕсем хăйсен ĕçĕпе тăван ене юратнине, унăн тирпейлĕхĕшĕн тăрăшнине кăтартса панă. Ку ял тăрăхĕнче вырăнти çеç мар, Раççей пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем пурри экологи субботникĕн пĕлтерĕшне ўстернĕ кăна. Темиçе ĕмĕрхи юман, Чăваш Енри пĕртен-пĕр шыв сикки, Атăлăн илемлĕ çыранĕ – вырăнта пурăнакансемшĕн те, хăнана килекенсемшĕн те меллĕ кану вырăнĕсем, çут çанталăк палăкĕсем. Çавăнпа кунта çулсеренех массăллă культура мероприятийĕсемпе кану çул çўревĕсем сахал мар иртеççĕ.

Иртнĕ вăхăтра çав вырăнсенче йăлари çўп-çап сахал мар пуçтарăннă. Экологи субботникне ăна тасатассипе йĕркеленĕ те. Перчеткесемпе, михĕсемпе тухса активистсем хăйсен харпăрлăхĕнчи территорие тĕплĕ тасатнă, çапла майпа экологи культурине лайăхлатассипе воспитани ĕçĕ ирттернĕ.

Экологи субботникĕ Ильинка ял тăрăхĕнче тăван ене юратакан çынсем йышлă пурăннине кăтартса панă. Вĕсен ĕçĕ малашлăх валли ытти-семшĕн те паха тĕслĕх пуласса шанма пулать.

А. БЕЛОВ.

Шалти ĕçсен пайĕнче

Çĕнĕ ертўçĕ ĕçе тытăнчĕ

Ĕнер Муркаш районĕнче ĕçлĕ çул çўревпе Чăваш Ен тăрăх шалти ĕçсен министрĕ Виктор Шметков пулчĕ. Вăл Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн коллективне вĕсен çĕнĕ ертўçипе паллаштарчĕ.

Çапла ĕнертен пуçласа ку тивĕçе Александр Федоров полици майорĕ пурнăçлама тытăнчĕ. Вăл Чăваш Енрех çуралса ўснĕ. Юлашки çулсенче Сĕнтĕрвăрри районĕ тăрăх шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумĕн должноçĕнче вăй хунă, РФ Шалти ĕçсен министерствин управлени академийĕнче ăсталăхне ўстернĕ.

Унччен Муркаш районĕнчи шалти ĕçсен пайне Владимир Степанов тăватă çула яхăн ертсе пычĕ. Оперативлă ĕç кăтартăвĕсемпе районти полицейскисен коллективĕ юлашки çулсенче республикăра малтисен ретĕнче пулнă.

Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев çĕнĕ ертўçе ăнăçусем сунчĕ, район администрацийĕ те, вырăнти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те çыхăнса ĕçлеме хатĕррине палăртрĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Саламлатпăр

Çĕр çинчи чи юратнă йăмăка тата хĕрпултăра, ăшă кăмăллă акине – **Ирина Петровна КУЗИНĂНА** çуралнă кунĕ

ячĕпе чĕререн тухакан чи ырă сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана кĕрўпе пире пулăшса пынăшăн. Ачусемпе, мăшăрупа, тăван-хурăнташпа савăнса пурăнма çирĕп сывлăх, инçе çул евĕр вăрăм кун-çул, ытам тулли телей, тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хал, тулăх пурнăç сунатпăр. Ирина, эс ĕмĕтленнĕ ĕмĕтўсем çитсе пыччăр, мĕн шутланисем пурнăçланччăр. Килте яланах юратупа килĕшў хуçаланччăр.

Чи ăшă саламмпа: Алексей пиччĕшĕ, Алевтина инкĕшĕ тата вĕсен ачисем.

Чи юратнă, чи хаклă мăшăрăма, аннене – **Ирина Петровна КУЗИНĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе питĕ ăшшăн саламлатпăр.

Ирхи сывлăм пек таса кун-çул, çирĕпрен те çирĕп сывлăх, хуркайăк çулĕ пек вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Мăшăрăм, анне, эпир сана питĕ хытă юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Эпир – яланах санпа юнашар. Санăн малаллахи пурнăçу юмахри пек телейлĕ те пуян пултăр. Пурнăçăн кашни килекен кунĕ ырлăх илсе килтĕр, çав ырлăхпа киленсе пурăнма Турă пулăштăр.

Чунтан хисеплесе: юратнă мăшăрĕпе ачисем.

Юратнă аннене, кукамая, мăнака – Пиккикассинче пурăнакан **Анфиса Гавриловна ЖИРНОВĂНА** 94 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эсĕ пурришĕн савăнатпăр, санпа мухтанатпăр, сан умăнта пуç таятпăр.

Сана юратса саламлаканĕсем: ачусем, мăнукусем, кĕçĕн мăнукусем.

Сывлăх

Ытлашши сахăр та, тăвар та сиенлё

Чёрешён хăрушă продуктсен шутёнче – пирён сётел çинче куллен тёл пулакан апат-çимёç. Çавăнпа та вёсене чакарса пымалла е пачах та çимелле мар. Медицина наукисен кандидачё, кардиолог врач Анна Корневич кун пек продуктсен шутёнчи чи хăрушă пилёк продукт пирки уйрăммăн каласа панă.

Çапла унăн шухăшёпе чи сиенли – пылак апат-çимёçре, çăкăрпа булка изделийёсенче тата ытти продукт тытăмёнче пур сахăр. Врач торт, пирожнăй, чипс, канфет, мороженăй, çура ăшаланă çёрулми (фри) çиессине май пур таран ытларах чакармаллине каланă. Çăкăрне те чи лайăх сортлă çăнăхран пёçернине мар, хывăх хушса пёçернине çимелле. Кулленех пăтă çимелле, апатлану рационёнче тулăн хытă сорчёсенчен хатёрленё макарон та пулмалла.

Тепёр хăрушă продукт – тăвар. Апата тутанмасăрах тăвар хушса çиессинчен хăтăлмалла (кулленхи норма – 6 грамм: тӳпелемесёр тултарнă чей кашăкё). Тăвар ытлашши пулни юн пусăмё çине, пӳресем ёçлесси çине, организм кальци йышăнасси çине япăх витём кӳрет. Тăвар пухăнма тытăнать, сыпăсемпе шăмă чирёсем те кёттермеççё.

Алкоголь те çак списокрах. Врач хёрлё «типё» эрех кăна ёçме юранине каланă, анчах та ӳкиччен мар – пёр-икё бокал çеç. Тата эрнере виçё-тăват хутчен ытла мар. Сăра уйрăмах сиенлё иккен.

Тепёр продукт – трансçусем. Вёсем ӳсен-тăран тата чёр чун çăвёсене тепёр хут вёрилентерсе усă курнă чух тухаççё. Трансçусем çурмафабрикатра, хăвăрт хатёрлесе çимелли апатра, сосискăсенче те сахал мар.

Пальма çăвё те хăрушлăх кăларса тăратать. Çак çăва ытларах чухне кондитер изделийёсене хатёрленё çёре хушаççё. Ăна врач питё пахалăхсăр та сиенлё тет, анчах та йӳнё хака пула унпа анлăн усă кураççё.

«Новости» РИА.

Полици хроникинчен 12+

Хăратса укçа ыйтнă

«ВКонтакте» социаллă сетьре Шетмёпуç ял тăрăхёнчи пёр каччăпа «ырă сунакан» каласу пуçарнă. Çёрлехи паллашу майёпен хăратасси патне çитсе тухнă. Паллă мар çын 22 пин тенкё укçа ыйтма тытăннă, унсăрăн сетьре каччăна намăс кăтартакан видео сарассине пёлтернё.

Халё ку факт тёлёшпе уголовлă ёç пуçарнă. Социаллă сетьри «юлташсемпе» асăрханулăх кирлине асра тытмалла.

Путексем сутăнман, енчёкё пушаннă

Турай ял тăрăхёнче пурăнакан пёр хёрарăм Интернетри пёлтерӳсен сайчё урлă качака путеккисене сутас тенё. Çак пёлтерӳ тăрăх тавара туянакан та тупаннă, анчах ăна качака путеккисем мар, вёсен хуçин банк картти интереслентернё. Сăмах хыççăн сăмах вакласа çак ултавçă качака путеккисене туянман кăна мар, сутуçăн картта çинчи 2 пин тенке яхăн укçине те вăрланă.

Интернет пысăк асăрханулăх ыйтать. Районта пёлтерӳ панă пулсан вара путеккисене те туянёччёç пулё, укçи те çухалмёччё.

Пичете РФ Шалти ёçсен министерствин Муркаш районёнчи пайён материалёсем тăрăх хатёрленё.

КУПЛЮ / ТУЯНАТĂП

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-961-344-03-82. Рома. 6-20.

* * *

КУПЛЮ БЫЧКОВ от 10 дней до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-937-952-33-80. 4-5.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33. 4-5.

* * *

КУПЛЮ бычков от месяца до 550 кг, коров, телок. Вынужденный забой в любом состоянии. Тел. 8-937-951-19-03. 13-31.

* * *

Закупаю дорого! КОРОВ, БЫКОВ, ТЕЛОК НА МЯСО. Тел. 8-961-345-77-89. 13-31.

* * *

ТУЯНАТПĂР: ёнесем, вăкăрсем, тынасем, лашасем, усрамалли пёчёк вăкăрсем, чирлё, кӳпёнсе кайнă выльăхсем. Хаклă хакпа. Игорь. Тел. 8-937-958-29-89. 9-10.

ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровым инженером Николаевым Андреем Витальевичем, № квалификационного аттестата кадастрового инженера: 21-11-68, от 28.04.2011г., СНИЛС №110-257-732 10, номер регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность 14148, состоящего в некоммерческой саморегулируемой организации Ассоциация «Гильдия Кадастровых Инженеров» №802/10-16 от 13.10.2016г., выполняются кадастровые работы в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:140201:23, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, Хорнойское сельское поселение, д. Ижелькасы, ул. Восточная, д. 24.

Заказчиком кадастровых работ является Панайтиди Александр Михайлович, проживающий по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр-т Тракторостроителей, д 35/19, кв. 39.

Собрание по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, Хорнойское сельское поселение, д. Ижелькасы, ул. Восточная, д. 24 24.07.2020г. в 10 часов 00 мин.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Чувашская Республика с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 в межевой организации ООО «Аршин».

Требования о проведении согласования местоположения границы земельного участка на местности принимаются с 24.06.2020г. по 24.07.2020г., обоснованные возражения о местоположении границы земельного участка после ознакомления с проектом межевого плана принимаются с 24.06.2020г. по 24.07.2020г. по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Смежный земельный участок, в отношении местоположения границ которого проводится согласование: кадастровый номер 21:17:140201:22, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, Хорнойское сельское поселение, д. Ижелькасы, ул. Восточная, д. 22, принадлежащий Архиповой Калерии Архиповне.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок (часть 12 статьи 39, часть 2 статьи 40 Федерального закона от 24 июля 2007г. №221-ФЗ «О кадастровой деятельности»).

ПРОДАЕМ: ПИЛОМАТЕРИАЛЫ, ВАГОНКУ, ШПУНТ, БЛОКХАУС. Тел. 8-906-130-30-00. 1-10.

ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и другое. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ от 1 до 15 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 6-10.

«ОТДЕЛОЧНИК»
СТРОИТЕЛЬНЫЕ МАТЕРИАЛЫ
ЦЕМЕНТ М-500 - 250 руб.
ПРОФНАСТИЛ ПО РАЗМЕРАМ ЗАКАЗЧИКА, 2 метровый - 502 руб.,
УТЕПЛИТЕЛЬ - 400 РУБ.
САЙДИНГ - 135 РУБ.
ФАНЕРА, ОСП - 485 РУБ.
Тел. 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 2-10.

ОКНА, ДВЕРИ.
Гарантия. Качество. НЕДОРОГО. Скидки.
Тел. 8-987-579-25-33. 4-10.

ПРОДАЕМ В МОРГАУШАХ песок, гравмассу, щебень, бой кирпича, грунт, асфальтную крошку. Доставка. Скидки. Тел. 8-952-758-82-84. 2-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 150 руб!!!
Тел. 8-909-300-33-66. 44-97.

ЭЛЕКТРОПАСТУХИ по сниженным ценам. ООО «Агро-Сфера». Тел. 8-987-678-54-59, 8-937-390-37-72. 2-15.

Кивелнё ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхё! Кил-çуртри электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр. Тел. 8-937-015-35-40. 1-10.

Бройлер, хур, кăвакал, мулард, кăркка чёпписене сутатпăр. Нумай илекенсене леçсех паратпăр. Килтен те илме пулать. Тел. 8-906-130-82-51, 8-937-395-16-03. Оля. 10-10.

Продаю кур, гусят, утят, мулардов, бройлеров, индюков. Доставка. Тел. 8-909-300-08-18. 5-10.

* * *

СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует ячмень по цене 9 руб со склада, с доставкой – 10 руб за 1 кг, ЭКД по цене 20 руб. за 1 кг. Вход на территорию в масках и перчатках. Тел. 8-937-012-58-80, 8-937-012-51-31, 8-937-012-13-34, 8-937-012-73-75. 10-10.

* * *

Уйăх çурăри сысна çурисем сутатпăр. Тел. 8-906-387-44-47. 2-2.

* * *

Продаю однокомнатную квартиру пл. 33,2 кв.м в с. Моргауши по ул. Гагарина. Тел. 8-906-134-20-94. 3-3.

Объявления

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; шпунтованные доски, вагонку; цемент, кирпич. Доставка. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 11-20.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Срубы на заказ. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.

ПРОДАЮ ГРАВМАССУ, ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Недорого. Тел. 8-905-199-69-33. 8-10.

* * *

ПЕСОК, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (известковый, гранитный). ТОРФ. ДОСТАВКА. НЕДОРОГО. Тел. 8-987-667-42-51. 6-10.

* * *

Все виды строительных работ от подрядчика: дома, бани, гаражи, фундамент, забор, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Проект, смета – в подарок. Работаем: с материнским капиталом, сельской ипотекой. Рассрочка, кредит. Продаем бетон, профнастил, цемент и т.д. Тел. 8-937-397-08-71, 8-937-940-80-55. 4-10.

* * *

Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка. Доставка. Тел. 8-927-857-21-33, 8-937-393-37-07. 22-64.

* * *

ВСЕ ВИДЫ СТРОИТЕЛЬНЫХ РАБОТ. Дома и бани под ключ, кровля любой сложности. Внутренняя и внешняя отделка, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Рассрочка. Кредит. Тел. 8-927-992-32-42, 8-987-670-56-78. 8-10.

* * *

Продаю навоз, песок, гравмассу с доставкой. Недорого. Тел. 8-905-027-37-65. Леонид. 2-12.

* * *

Продаю навоз, чернозем, торф, песок, гравмассу, грунт, гравий, щебень, бой кирпича. Доставка. Недорого. Тел. 8-905-198-63-88. Димитрий. 14-25.

* * *

ПРОДАЮ: ГРАВМАССУ, БОЙ КИРПИЧА, ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Недорого. Тел. 8-905-028-22-25. 2-10.

* * *

Песок, гравмасса (ПГС), услуги КамАЗ-самосвала, услуги манипулятора. Работаем без выходных, доставка в любое удобное для Вас время. Тел. 8-927-993-17-72. 10-10.

* * *

Продаю: песок, щебень, гравмассу, бой кирпича. Доставка. Тел. 8-919-650-96-68. 11-12.

* * *

ГРАВМАССА, ПЕСОК. Доставка. Тел. 8-906-380-12-36. 7-8.

* * *

ЗАБОРЫ ИЗ СЕТКИ-РАБИЦЫ, СВАРНОЙ СЕТКИ, ПРОФНАСТИЛА, ЕВРОШТАКЕТНИКА. ВОРОТА, КАЛИТКИ, НАВЕСЫ, КОЗЫРЬКИ. БЛАГОУСТРОЙСТВО ЗАБРОШЕННЫХ УЧАСТКОВ. ПЕНСИОНЕРАМ – СКИДКИ. Тел. 8-937-942-87-85. 6-20.

* * *

Продаю **чернозем, торф, асфальтную крошку, щебень, гравмассу, песок, бой кирпича и бетона, вывоз строительного мусора.** Тел. 8-917-676-93-79, 8-961-347-25-47. 4-10.

РАБОТА / ЁÇ

Требуются строительные бригады (3 – 5 человек в бригаде) в Москву: плотники, каменщики, кровельщики, отделочники. Своевременная оплата, трудоустройство. Работа постоянная и круглогодичная. Проживание и питание. Наличие автомобиля и инструментов приветствуется. Тел. 8-985-239--58-96. 1-5.

В Чувашский филиал «Россельхозцентра» требуются трактористы и специалисты в специализированную лабораторию, агрономы. Тел. 8(8352)51-44-12. 4-5.

* * *

В автосервис «Мой мастер» требуются на постоянную работу: автослесарь (электрик), автомойщик. Тел. 8-927-847-45-08. 1-2.

* * *

Требуются монолитчики, плотники, шлифовщики для работы в Москве: строительство жилых домов. Проживание в бытовом городке. 3-хразовое питание, баня, душ. Вахтовый метод. З-п от 60 тыс. руб. Полная информация по телефону. 8-927-868-00-09. 1-2.

Прогноз погоды По данным сайта rp5.ru

	Вторник				Среда				Четверг				Пятница			
Местное время	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21
Облачность %																
Явления погоды																
Температура	+9	+19	+19	+15	+13	+18	+19	+14	+11	+13	+14	+13	+12	+18	+20	+15
Ощущается	+7															
Давление	749	749	748	748	747	747	748	749	750	751	752	751	751	750	749	748
Ветер	3	3	4	4	4	5	6	4	3	6	6	3	3	7	7	4

Атапайри вёренӳпе культура центрёнчи библиотекăра нумай çул ёçленё

Лия Валериановна МАКСИМОВА

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унпа пёрле ёçленё ёçтешёсемпе юлташёсем унăн тăванёсемпе тата çывăх çыннисемпе пёрле тараннăн хурланни çинчен пёлтереççё.

Муркаш районёнчи «Çёнтерӳ ялавё» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвёпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвёпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районён «Çёнтерӳ ялавё» хаçат редакцийё» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийё.

Тёп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресё: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялё, Мир урамё, 9А çурт.
Телефонсем: тёп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайё – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайёсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ёçлекен управленийё 2012 çулхи юпа уйăхён 11-мёшёнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрацилене.

Калăпăшё 1 пичет листи.
Ал çырăвёсене рецензилемеççё, каялла тавăрса памаççё, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççё.
Рекламăпа пёлтерӳсен чăнлăхёшён вёсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалё.

ИЗДАНИ ИНДЕКСЁ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйё Н.Н. Николаева
Пичете панă 22.06.2020 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4548.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çёнтерӳ ялавё», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.